


*Петĕр Ялгир йĕркелесе пырать*
*Укерчĕкĕсем—Леонид Павловăн*

## Иван Курак



*Иван Игнатьевич Кураков 1889 çулта Ульяновск облаçĕнче, Ķивĕ Кăлатка районĕнчи Чăваш Кăлатки ятлă ялта çуралнă. Ялти шкулта тата Аçтăрханти художество шкулĕнче вĕреннĕ.*
*1918—1922 çулсенче граждан вăрçинче пулнă. Ун хыççăн хресчен ĕçĕпе пурăннă. Сăвă-калав çырнă. Хайлавĕсене «Ĕçлекенсен сасси», «Сунтал» журналсенче, «Коммунар» хаçатра пичетленĕ. 1926 çулта унăн «Сăвăсем» кĕнеке тухнă. Вăл 1942 çулта вилнĕ.*

### КОММУНИСТА

Çутă пурнăçшăн
Вăйна хунăшăн,
Çутта кайнăшăн,
Юлташсем, телей.

Ушкăна кĕрсе
Ĕçлеме тухрăн,
Пур вăйна хурса
Эсĕ тăрăшрăн.

Пурнăç кунĕ
Илемлĕ курнать.
Тĕрĕслĕх çулĕ
Тĕнчене тухать.

Чечек пек шăтать
Пулăшу, сана
Çўле хăпартать,
Çеçкене ларать.

Вĕсене курса
Вĕçессĕм килет,
Ыр шăршă пухса,
Сывлассăм килет.

Çут тĕнче пăхать
Кăмăллă куçпа,
Пур çынна йыхăрать
Савăнăç курма.

Çутă пурнăçшăн
Вăйна хунăшăн,
Çутта кайнăшăн,
Тантăш, тавтапуç!

1925 ç.

### ТАКМАКСЕМ

Ĕçлесе анчах çиме
Епле вĕрентетпĕр!
Ĕмĕрхи кахалсене
Йĕркене кĕртетпĕр.

Халăх мулне упрама
Епле вĕрентетпĕр!
Ķолхоз тырне вăрласан,
Чикелентеретпĕр.

Бюрократ таврашсене
Епле вĕрентетпĕр!
Йĕплĕ çăмах вĕсене
Çийĕнчех сĕнетпĕр.

Сĕмсĕр шухăшлисене
Епле вĕрентетпĕр!
Ăшă вырăнĕсенчен
Хăвăрт сирпĕтетпĕр.

1933 ç.

### ĔМĔТ

Ешĕл улăх эпĕ куртăм.
Унта çырма авкаланса
Кĕмĕл пек юхать. Çав юхăм
Ялкăшать хавхалатса.

Тин тĕрленĕ симĕс çаран
Аш-чикĕме хăпартлать.
Малалла вăл кăмăлтан
Астарать те йыхăрать.

Эх, шывăм, юхăм çырма,
Эс хускатрăн чунăма.
Саврăм кăтра вăрмана,
Саврăм лапри çарана.

Эх, сĕм-сĕм вăрманта
Завод ўснине курасчĕ,
Уй-хирте те çаранта
Машин сасси тăнласчĕ!

1924 ç.

### ШАНЧĂК

Нумаях пулмасть,
Хĕл сиввинче
Ķашкăр уланă-йынăшнă чухне
Тухса кайрăм
Ялтан инçе,
Çăтас мар тесе пурнăç йўçекне.

Халĕ ак
Çилтăвăлпа ўсĕрĕлнипе
Ķаллех тухрăм
Тăван урам хушшине.
Чунтан хăпартланса
Кăмăл çĕкленнипе
Тухрăм
Ешерме пуçланă тыр пуссине.

Сухăратăп,
Савăнса кăшкăратăп,
Ķашни курак тăнлать-тăр:
— Эй, курак, мĕн-ма макăратăн?
Пурнăç часах
Лайăхланĕ — шансах тăр!

1923 ç.

## Григорий Алендей



*«Канаш» хаçатра 1920 çулта Григорий Алендей «Ирттĕр кивĕ ĕмĕр» ятлă сăвă пичетлесе кăларнă. Кун хыççăн вăл çырнисем «Канашра» та, «Ĕçлекенсен сасминче» те, «Сунталта» та пичетленеççĕ. 1925 çулта унăн «Пирĕн сăвă» ятлă кĕнеке тухнă. Вăл калав-повеçсем те çырнă. «Тантăшсем» ятпа икĕ хутчен проза кĕнеки кăларнă.*
*Г. Алендей 1903 çулта Вăрмар районĕнчи Кĕтеснерте çуралнă. 1974 çулта вилнĕ. Мускаврa Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен коммунистла университетĕнче вĕреннĕ. «Канаш» хаçат редакторĕн заместителĕнче ĕçленĕ, учительте, парти ĕçĕнче пулнă. Чăваш поэзине Г. Алендей Аслă Октябрьпе çĕнĕ самана сăвăçĕ пулса кĕнĕ.*